Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович

## Книга: Асатте парни

## Стихотворение: Çĕрçи

**(Халăх юмахĕнчен)**

Эп пуçлам-ха халапа,
Эсир ларăр халь шăпах.
Пĕр çул питĕ сив хĕл килчĕ,
Хытă çăтăрласа илчĕ.
Ачасем, çав çулхине
Çĕрçи хыт тертленнĕ, тет:
Тупма çук-çке апат-çимĕç,
Выçăпа вилесех килмĕ.
Анчах çерçи хăраман,
Йывăрлăха парăнман,
Кĕрет вăл пĕр ирхине
Пуян патне, картишне.
Çак пуян çын лашисем
(Кунта пур-мĕн юпахсем,
Тимĕр-кăвак ăйăрсем)
Сĕлĕ çисе киленнĕ,
Тăпăртатнă, кĕçенне.
Çак лашасем умĕнче,
Кункăрасем тĕпĕнче,
Çиме апат пулнă-мĕн,
Ылтăн сĕлĕ пулнă-мĕн.
Çерçи чунтан савăнать,
Йăлăнмашкăн тытăнать:
– Мана сĕлĕ парсамăр,
Вилес çĕртен çăлсамăр!..
Пуян çыннăн лашисем,
Çисе тăраннăскерсем,
Пуçĕсене йăтаççĕ,
Выç çĕрçие калаççĕ:
– Сĕлĕ ан ыйт эс пиртен,
Тухса сирпĕн витерен!
Çĕрçи хытă кулянать,
Хăлтан каять, аптăрать,
Хăй çапах та хăрамасть,
Йывăрлăха парăнмасть,
Вара тепĕр ирхине
Кĕрет чухăн картишне.
Картишĕнче ут тăрать,
Сĕле çиет, савăнать,
Лаша, çĕрçие курсан,

Чӗнет ырӑ кӑмӑлтан:
– Апат вӑхӑчӗ, тӗлех,
Çерçи тусӑмçӑм, килех.
Пур чух пултӑр улпутла,
Çук чух пултӑр чухӑнла.
Эсӗ кӑштах сӑхнипе
Эпӗ çука юлас çук.
Пурнӑпӑр-ха майӗпе
Тӗнчере тус-йыш пур чух.
Шаларах лар, кунтарах,
Çил вӗрмест кункӑрара. –
Лаша сӗлӗ çитерет,
Çӑнӑхлӑ шыв ӗçтерет.
Çӗрçи çук çын лашине
Шутлать тусӗ вырӑнне.
Чун-чӗререн тав тӑвать,
Пуçне тайса ыр сунать.
Унтан пӗр ял еннелле,
Хӑйӗн йӑви патнелле,
Хуллен кӑна вӗçтерет,
Сыв юлнишӗн хӗпӗртет.
Хӗл иртет те çур çитет,
Çур иртет те çу килет.
Шӑрӑх, йывӑр сывлама,
Çук-çке тарса хӑтӑлма,
Ытла нумай пӑвансем,
Сӗрлсç вӑрӑмтунасем.
Леш пуян çын лашисем
Аптӑраса ӳкеççӗ,
Пуçа çӳле йӑтнисем
Ним тума та пӗлмеççӗ.
Çакӑ йывӑр вӑхӑтра
Аслӑ ешӗл çаранта
Чухӑн çынӑн лашине,
Хӑйӗн çывӑх чӑн тусне,
Хальхи çерçи сыхланӑ,
Юн ӗçен пӑвансене
Хыпа-хыпа вӑл янӑ.
Усал вӑрӑмтунасем,
Хаяр шӑна-пӑвансем
Лаша патне пырайман,
Вӗсем ӑна çыртайман!

1960

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.